25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 СЕНТЯБРĔН 29 ЫТЛАРИКУН 227 (6162) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

МТС-сен Политотделĕсем тăратнă тăрăх, пысăк ĕç тухăçлăхĕ кă-тартнăшăн тата машинăсемпе тракторсен паркĕпе лайăх усă курнăшăн ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине çак-сене кĕртнĕ:

Комсомольски МТС тăрăх:

116. Комбайнер **Герман Иванович Портнов.** Вăл «Коммунар» маркăллă комбайнпа ĕçлесе планра кăтартнă 200 гектар вырăнне 302 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă, 190 килограмм горючи перекетленĕ.

117. Комбайнер **Павел Николаевич Трофимов.** Вăл тырра комбайнпа вырмалли плана 133 процент тултарнă, 89 килограмм горючи перекетленĕ.

118. Тракторист **Дмитрий Ильич Коновалов.** Вăл трактор ĕçĕсен çул-талăкри планне135 процент тултарнă, 266 килограмм горючи перекетленĕ.

Чкаловски МТС тăрăх:

119. Тракторист **Василий Егорович Марков.** Вăл трактор ĕçĕсен çул-талăкри планне 157,5 процент тултарнă, 261 килограмм горючи перекетленĕ.

120. Трактористка **Александра Константиновна Константинова.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 157 процент тултарнă, 804 килограмм горючи перекетленĕ.

121. Тракторист **Егор Сидорович Львов.** Вăл трактор ĕçĕсен планне 197 процент тултарнă, 247 килограмм горючи перекетленĕ.

122. Тракторист **Александр Иванович Шекеров.** Вăл трактор ĕçĕсен çулталăкри планне 134 процент тултарнă, 74 килограмм горючи пере-кетленĕ.

123. Комбайнерка **Александра Максимовна Андреева.** Вăл «Коммунар» маркăллă комбайнпа ĕçлесе 225 гектар çинчи тырпула вырса пуçтарнă, планра 130 гектар кăтартнă пулнă.

Кĕрхи çĕртмене хăвăртрах туса пĕтерер

Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе плана кашни колхозпа совхозра пурнăçа кĕрт-ни кăçалхи çул уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Кĕрхи çĕртме туса хăварни çитес çуркунне лашасемпе тракторсен ĕçне çăмăллатать, 1943 çул-хи çуракине иртерех те кĕске срок-сенче, тăпрари нÿрлĕхе ытларах упра-са хăварнипе туса ирттерме май па-рать. Кĕрхи çĕртме тунă чухне кăçал пирĕн колхозсен иртнĕ çулта пулнă çитменлĕхсене шута илсе ĕçлемелле. Иртнĕ çул, тырпулсене пухса кĕртнĕ хыççăн, хăмăллă пусăсене начар суха-ласа хăварнине пула тата çуркунне çĕре ăшăх сухаланипе кăçал уйсенче çумкурăкĕсем йышлă пулчĕç. Çитес çул та çавăн пек ан пултăр тесен, кă-çал кĕрхи çĕртме сухине уйрăмах тим-лĕн, пысăк пахалăхпа туса хăвармалла. К[illegible]с çул акмалли пĕтĕм çĕрлаптăкне сухаласа хăварма тата ăна кирлĕ чух-лĕ тарăн сухаласа хăварма тăрăшмалла.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюро-вĕ «1942 çулта кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе государство планне пурнăçа кĕртмелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленире колхозниксемпе колхоз-ницăсене, трактористсемпе тракторист-кăсене кĕрхи çĕртме сухине ăнăçлăн туса ирттерме лайăх майсем кăтартса пачĕç.

Кĕрхи çĕртме тумалли сезонри нор-мăна октябрĕн 10-мĕшĕччен пурнăçа кĕр-текен трактористсемпе трактористкăсем МТС-сенче 60-шар ĕçкунĕ чухлĕ преми, совхозсенче сентябрь уйăхĕшĕн шутла-са панă ĕçукçи чухлĕ преми илеççĕ. Сезонра тумалли ĕç нормисене ирттер-се пурнăçланăшăн нормăран ирттерсе сухаланă кашни гектаршăн МТС-ри трактористсене ĕçкунĕсем 1,5 хут ÿс-терсе, совхозсенчи трактористсене халиччеихи расценкăсенчен 1,5 хут ÿс-терсе тÿлесе пама йышăннă. Кĕрхи çĕртме ту-малли сезонри нормăна тултарса пыра-кан колхозсене [illegible] ĕçкунĕ премие илессĕ, сезонри нор-мăна ирттерсе пурнăçласа пыракан-сем нормăран ирттерсе сухаланă кашни гектаршăн ĕçкунĕсене икĕ хут ÿстерсе илеççĕ.

Çак майсемпе туллин усă курса рес-публикăри МТС-семпе колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçĕн хăвăртлăхне хал-ÿстерсе пыма тивĕçлĕ. Колхозниксемпе колхозницăсене хушшинче ăнлантарулла ĕçе лайăх туса пынипе Шăхасан ра-йонĕнчи колхозсенче кĕрхи çĕртме тă-васси хастар пырать. [illegible]

Сентябрĕн 25-мĕше тĕлне районри кол-хозсем кĕрхи çĕртмене 2385 гектар су-халанă. Çавăн пекех кĕрхи çĕртме тă-вас ĕç Калинински, Тăвай районĕсенчи колхозсенче те ÿссе пырать. Тăвай ра-йонĕ кĕрхи çĕртме тăвас плана сентяб-рĕн 25-мĕш тĕлне 21,3 процент, Кали-нински район 24,7 процент пурнăçланă.

Анчах та республикăра кĕрхи çĕртме тăвас ĕç кирлĕ хăвăртлăхсемпе пулса пымасть-ха. Çак иртнĕ пилĕк кун хуш-шинче республикăри колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре 5,2 процент çеç ма-лалла ÿсĕм тунă. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне пурĕ 36.118 гектар сухаласа кĕрхи çĕртме тумалли плана 14,4 про-цент пурнăçланă.

ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш О[illegible] бюровĕн постановленине тĕплĕн пур[illegible]ласа пырса, к[illegible]рхи çĕртме тăвас

ĕçре халех татăклă улшăнсем тумалла. Партипе совет тата комсомолăн район-ри организацийĕсен кĕрхи çĕртме тă-вас тĕлĕшпе государство планне пур-нăçа кĕртессишĕн ытларах вăй хурса ĕçлемелле. Кĕрхи çĕртме планне кашни колхозра пĕр пăркаланмасăр пурнăç-лассишĕн пĕтĕм вăя пухса ĕçлемелле.

Постановлени тăрăх, кĕрхи çĕртме тунă çĕре сентябрĕн 20-мĕшĕнчен пуç-ласа мĕнпур ĕçлекен лашасемпе вă-кăрсен 40 процентне куçармалла тата вĕсемпе хуçалăхри тĕрлĕ ĕçсенче усă курассине мĕн май килнĕ таранах ча-кармалла. Кĕрхи çĕртме тунă çĕрте ĕç тухăçлăхне ÿстерес шутпа лашасене сменăсем тăрăх улăштарса ĕçлеттер-мелли майпа анлăн усă курма тата кашни плуг валли плуг тимрисем çителĕклĕ таран юсаса, хăйраса хума сĕннĕччĕ. Хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕн руко-водителĕсемпе колхоз председателĕсем çакна ăна паянхи куна çитсе те пур-нăçламан. Çавна пула нумай колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре графика пур-нăçласа пыраймаççĕ.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçре уйрăмах Ку-вакино, Пăрачказ, Красноармейски, Первомайски, Йĕпреç, Советски районĕ-сенчи колхозсем кая юлса пыраççĕ. Кувакино районĕнчи колхозсем кĕрхи çĕртме сухине пурĕ те 348 гектар çин-че çеç тунă. Ку вăл плана 3,6 процент пурнăçлани пулать. Çавăн пекех Пă-рачкав районĕ те чăтма çук юлса пы-рать.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçĕн хăвăртлăхне малалла вăйлăн ÿстерсе пыма нимĕнле чăрмавсем те пулмалла мар. Партипе правительствăн постановленине тÿррĕн пурнăçласа пырса кĕрхи çĕртме тăвас ĕçри çитменлĕхсене халех пĕтермелле.

Çĕршывра нимĕç захватчикĕсене хи-рĕç хаяр çапăçусем пынă вăхăтра кашни грамм горючи хаклă. Çавăнпа кĕрхи çĕртме сухине ытларах лашасем, вăкăрсем вăйне тума кирли [illegible] те паллă. Çавăнпа та МТС тракторĕсене [illegible] Ку тĕлĕшпе Красноармейски районĕнчи колхозниксем [illegible] юлташĕн ĕç опычĕ [illegible]

Кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе госу-дарство планне кашни колхоза пур-нăçламалла, [illegible] Кирек мĕнле условире те кĕрхи çĕртме тумалли 18—20 сантиметртан ăшăк мар сухамал-ла. Анчах та хăшпĕр районсенчи ру-ководительсем çакăн çине çиелтен пă-хаççĕ. Вĕсем хăшпĕр колхозсенче çĕре ăшăх сухаланине кураççĕ пулсан та, ĕçе вăхăтра тÿрлетмеççĕ. Çакăн пек практикăна пĕтĕмĕшпех сивлемелле, ĕçе ячĕшĕн çеç тума пăхакансене айăпласа ответ тыттармалла.

ВКП(б) райкомĕсемпе МТС политот-делĕсен кĕрхи çĕртме тумалли плана хăвăртрах пурнăçа кĕртессишĕн тата ăна ирттерсе пурнăçа кĕртесси-шĕн колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва ан-лăн сармалла. Кĕрхи çĕртмене вăхăтра туса хăварса килес çулхи вăйлă тыр-пулăн никĕсне сирĕппĕн хывса хăва-рар.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

ВЦСПС-ра

Профессиллĕ Союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕпе ССР Союзĕн пĕр Халăх Комиссариачĕ август уйăхĕнче лайăх ĕçленĕ, пĕр йышши апласене тăвас тĕлĕшпе государство планне тултарнă тата ирттерсе тултарнă предприятисен шутĕнче Иванов юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завода палăртнă.

Хĕрлĕ ялава алăран вĕçертместпĕр

ÇЕМЕРЛЕ. («Чăваш Коммуни» корр.). Торф предприятийĕ кăçалхи сезона ни-хăçанхи пек мар хастарлă ĕçлет. Ра-бочисемпе работницăсем, социализмлă ăмăртăва куллен сарса пырса, тăван çĕршыва ытларах та ыт-ларах торф туса кăларнипе пулăшма тăрăшаççĕ. Вĕсем ĕнтĕ августри уйăхĕнчи результатсемпе Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çÿрекен Хĕр-лĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕç.

Çак кунсенче предприяти коллективĕ, хăйĕн ку тараничченхи ĕç итогĕсене пăхса туса, малашнехи задачăсем çинчен сÿтсе-явре.

Социализмлă ăмăртăва сарса пынă май предприяти çулталăкри производ-ство планне 130 процент тултарчĕ, планран ирттерсе тата темиçе çĕршер тонна торф кăларчĕ.

Ĕçре малта пыракансен примерĕсене сарса пынă май стахановецсен йышĕ чылай ÿсрĕ. Вĕсем хушшинче двухсот-никсемпе трехсотниксем те сахал мар. Лаптенкова, Тихонова, Толстова, Орти-кова, Тенкова, Журавлева, Милина, Ор-ликова юлташсем юлашки уйăхсенче хăйсен нормисене 300—340 процент тул-тарса пыраççĕ. Вĕсем çак çитĕнĕве хăйсен ĕçне технологи процесне урăх-ласа лайăхлатнипе, ĕç кунĕпе туллин усă курнă май турĕç. Вĕсен ĕçĕнче простой çук.

Предприяти умĕнче халĕ кăларнă торфа типĕтес, ăна тирпейлĕн тыт-са урас, потребительсене лайăх пахалăх-лă торф парас задачăсем тăраççĕ. Çак задачăсене тивĕçлипе пурнăçлас тесе, предприятири рабочисемпе служащи-сем, инженерла-техникла работниксем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Çак уйăхра пур ĕçсене те туса пĕтерме обязательство илчĕç. Çавăнпа пĕрлех рабочисем аслă уяв тĕлне çитес çулхи сезона хатĕр-лесе çитме сăмах пачĕç.

Х. ЛИСИН.

Уйăхри плана 104 процент тултарнă

Шупашкарти ликерпа эрех завочĕ (директорĕ Г. А. Фройман юлташ) сен-тябрĕн 26-мĕшне çак уйăхри плана 104 процент тултарнă, халĕ заводра планран ирттерсе продукци туса кă-ларас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Сентябрь уйăхĕнче заводăн ректифи-каци цехĕ (начальникĕ Сахаров юл-таш), эрех тултаракан цех (начальникĕ Пегаева юлташ), продукцие тиесе яра-кан цех (начальникĕ Кравчук юлташ) аван ĕçленĕ. Работницăсем Пахмутова, Захарова тата Петухова юлташсем яла-нах ĕç нормисене ирттерсе тултарса пынă.

Завод коллективĕ подсобнăй хуçалăх-ри çĕрулмине срокчен 5 кун малтан кăларса пухса кĕнĕ.

Рабочисемпе работницăсем ăшă тум-тирсем пухас ĕçе хутшăнаççĕ. Паянхи куна 5 мăшăр çăматă, 6 мулаххай тата ытти япаласем те пухнă.

Уяв кунне çулталăк планне тултарнипе кĕтсе илеççĕ

ÇЕМĔРЛЕ. **(Хамăр корр.).** Механичес-ки арман коллективĕ продукци туса кăларассине кашни çулах ÿстерсе пы-рать. Иртнĕ çулта вăл 1940 çултинчен 30 процент ытларах продукци кăларнă.

Кăçал коллектив тата пысăкрах çи-тĕнÿ тăвассишĕн кĕрешет. Вăл ĕнтĕ 9 уйăх программине ытлашшипех ирттер-се тултарчĕ.

Нумаях та пулмасть арманта ĕçле-кенсем Владимир Ильич ячĕпе тăракан завод коллективĕн чĕнĕвне сÿтсе-яв-рĕç. Çавăн хыççăн вĕсем Октябрь уяв-не çулталăк планне тултарнипе, ĕç тухăçлăхне ÿстернипе тата продукцин хăйне ларакан хакне 17 процент чакар-нипе кĕтсе илме обязательство илчĕç.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ патĕнче У. Уилки господина хисеплесе тунă апатлану

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ Америкăри Пĕр-лешÿллĕ Штатсен Президенчĕн личнăй представительне У. Уилки господина хисеплесе Кремльте апатлану тунă.

Апатланура У. Уилки господин, США посолĕ В. Стендли господин, Великобритани посолĕ А. Керр господин, Бредли генерал, Файмонвилл генерал тата ыттисем те, çавăн пекех тата В. М. Молотов, маршал К. Е. Ворошилов, Л. П. Берия, А. И. Микоян, А. С. Щербаков, адмирал Н. Г. Кузнецов, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский юлташсем тата ыттисем те пулнă.

Уэнделл Уилки господин Мускавра пулни

США президенчĕн Франклин Рузвельтăн личнăй представителĕ Уэнделл Уилки господин Мускавра пурăннă вăхăтра Совет государствин руководителĕсемпе калаçнă, Совет общественноçĕн представителĕсемпе курнăçнă, столицăн хуçалăхлă тата культурăллă пурнăçĕпе паллашнă, пуринчен ытла вăл оборона валли ĕçлекен учрежденисемпе предприятисен ĕçĕсем çине тимлĕн пăхнă.

У. Уилки господин Ржев районĕнчи фронта кайса килнĕ, унта вăл командирсемпе, комиссарсемпе тата красноармеецсемпе чылай хут тĕл пулса калаçнă, çавăн пекех тата вăл генерал-лейтенант Лелюшенкăпа нумайччен калаçнă.

Мускавра У. Уилки господин хулари сывлăшран тапăнассинчен хÿтĕлекен объектсенчен пĕринче, пĕр çар госпиталĕнче, пĕр пысăк заводра, метрора, Ленин ячĕпе тăракан библиотекăра, Хĕрлĕ Çарăн Центральнăй çуртĕнче, «Красный Октябрь» ятлă кондитерски фабрикăра, пĕр пуçламĕш шкулта т. ыт. çĕрте те пулнă.

Çавсенче пулнă чухне У. Уилки господин нумай рабочисемпе, инженерсемпе, врачсемпе, учительсемпе, писательсемпе, предприятисемпе учрежденисен руководителĕсемпе калаçнă.

Чикĕ урлă каçса Мускава çитиччен господин У. Уилки çул май Куйбышев хулине кĕрсе унта темиçе кун пурăннă. Унта вăл пĕр заводра пулнă, пĕр пысăк совхоза кайса килнĕ, государствăн академиллĕ пысăк театрĕнче спектакльте пулнă тата совет общественноçĕн представителĕсемпе чылай хутчен курнăçса калаçнă.

Уэнделл Уилки господин Мускавран тухса кайнă

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕн личнăй представителĕ Уэнделл Уилки господин Мускавран тухса кайнă.

Аэродром çинчен У. Уилки господина Ютçĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Г. Деканозов юлташ, Тулашри Суту-илÿ Халăх Комиссарĕн заместителĕ А. Д. Крутиков юлташ, Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн коллеги членĕ К. А. Уманский юлташ, Моссовет председателĕн заместителĕ М. А. Яснов юлташ, полковник В. Н. Евстигнеев юлташ, çавăн пекех тата США посолĕ В. Стендли господин тата Великобритани посолĕ А. Керр господин ăсатса янă.

Франципе Совет Союзĕ панă коммюнике

Францин Национальнăй Комитечĕ Совет правительствине çакăн çинчен пĕлтернĕ: Франци гитлерла Германие парăннине йышăнмасăр, гитлерла Германие хирĕç Франдие ирĕке кăларасшăн кĕрешекен французсен движенине; вĕсем кирек ăçта пурăнаççĕ пулсан та, Францин Национальнăй Комитечĕ малашне «Кĕрешекен Франция» тесе ят пама шухăшлать. Совет правительстви Францин Национальнăй Комитечĕн çак шухăшне, вăл Франци патриочĕсем гитлерла Германие тата Европăри унпа пĕрле вăрçакан çĕршывсене пĕрлешсе çĕнтермешкĕн мĕнпур майсемпе пулăшма тăрăшнине палăртать тесе, йышăнать. Совет правительстви Францин Национальнăй Комитечĕпе çакăн пек ятсем парасси çинчен килĕшнĕ:

1. «Франс Комбаттант» («Кĕрешекен Франция») вăл—Францин капитуляцие йышăнман тата гитлерла Германипе Европăри унпа пĕрле вăрçакан мĕнпур çĕршывсене союзниксем пĕрле çĕнтерни урлă Франдие ирĕке кăларма кирек ăçта та мĕнпур средствăсемпе пулăшакан гражданĕсемпе территорийĕсен пĕрлешĕвĕ пулса тăрать.

2. «Францин Национальнăй Комитечĕ»—Кĕрешекен Францин ертсе пыракан органĕ пулса тăрать. Вăл Франци гражданĕсемпе Франци территорийĕсене вăрçа явăçтарса кĕрештермелли правăллă пĕртен пĕр орган пулса тăрать, вĕсен интересĕсене, пуринчен ытла çак вăрçă пырса тивеккеннисене, Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ умĕнче пĕр вăл анчах палăртса тăма пултарать.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 27-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 27-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Моздок** районĕнче тата **Синявино** районĕнче хаяррăн çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

Иртнĕ эрнере, сентябрĕн 20-мĕшĕпе 26-мĕшĕ хушшинче, сывлăшри çапăçусенче, аэродромсем çинче тата зенитнăй артиллери пенипе нимĕçсен 206 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн çав вăхăт хушшинче 156 самолет пĕтнĕ.

Пирĕн карапсем Хура тинĕс çинче противникăн 2.000 тонна водоизмещениллĕ транспортне путарнă.

* * *

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче полевой артиллерин 8 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникпа вăйлăн çапăçнă, унăн хаяр атакисене сире-сире янă. Нимĕçсем кăштах малалла куçнă пĕр участокра питех те вăйлă çапăçу пуçланса кайнă. Ку участокра кашни пÿрт-çуртшăн çапăçаççĕ. Пирĕн боецсем гитлеровецсене атакăланă та нимĕçсен 200 автоматчикне вĕлернĕ, 10 пулемет тата 2 миномет пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур, трофейăсем тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем тăшманран чылай çуртйĕре тасатнă, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 600 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре совет войскисем активлăн çапăçнă, уйрăм участоксенче противникăн атакисене сире-сире янă. Хĕрлĕ Çарăн Н-ски соединенийĕн боецĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2.500 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 18 танкĕпе бронемашинине, тĕрлĕ калибрлă 30 орудине, ултă кĕпçеллĕ минометсен 4 батарейине, 9 минометне, 19 пулеметне тата 3 самолетне пĕтерсе тăкнă. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 2 оруди, 23 станковăй тата ручной пулемет, 2 миномет, 60.000 винтовка патронĕ, 500 мина, автоматсемпе винтовкăсем тата ытти хĕçпăшалсем. Тепĕр участокра противникăн пехоти 40 танк пулăшнипе пирĕн позицисене кун каçиччен 8 хут атакăланă. Гитлеровецсен атакисене пурне те сирсе янă. Нимĕçсен 10 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Моздок районĕнче противникăн пехотин тата танкĕсен пысăк вăйĕсемпе çапăçнă. Пирĕн боецсен Чистяков юлташ командир пулса ертсе пыракан ушкăнĕ пĕр чугунçул станцийĕшĕн пынă çапăçура противникăн 5 бронемашинине тата пĕр танкеткине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем противникăн йышлăрах вăйĕсем хĕснипе халăх пурăнакан пĕр пунктран тухса кайнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре Н-ски соединенийĕн боецĕсем темиçе высотана тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр кун хушшинче 1.200 çынна çити вĕлерсе тăкнă, 6 танк персе çĕмĕрнĕ, 5 пулемет тата 4 миномет тытса илнĕ. Совет летчикĕсем противникăн аэродромĕ çине икĕ хутчен вĕçсе кайса нимĕçсен 11 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Синявино районĕнче пирĕн оборонăна саваланса кĕрсе кайнă противника пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ. Çав çапăçусенче нимĕçсен 21 танкĕпе бронемашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Воронежран çурçĕреллерехре пĕр рашăн темиçе кун хушши хаяррăн çапăçнă. Пирĕн чаçсем халĕ çав рашана тăшманран пĕтĕмĕшпех тасатнă. Рашăра гитлеровецсен 1.679 виле, 3 оруди, 6 миномет, 18 автомашина, темиçе çĕршер автоматпа винтовка тата минăсемпе винтовка патронĕсем нумай выртса юлнă.

* * *

Нимĕçсен 169-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 378-мĕш полкăн противотанковăй орудисен 14-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Юргенн Шрамм çапла каласа панă: «Пирĕн полк вăрçă пуçланнăранпах Хĕвелтухăç фронтĕнче тăрать. Официальнăй даннăйсем кăтартнă тăрăх, полкра çулталăк хушшинче 840 çын вилнĕ, 2.100 çын аманнă. Чăннипе илсен, çухатусем унтан темиçе хут ытларах. Пĕлтĕрхи июль уйăхĕнче Российăна килнĕ чухне пулнă салтаксемпе офицерсенчен пĕтĕм полкĕпе те темиçе çын кăна тăрса юл•ă. Ыттисем пурте вилсе пĕтнĕ, аманнă е пĕр хыпарсăр çухалнă. Полка ĕнтĕ темиçе хутчен те çынсем хушса пачĕç. Хушса паракан çынсем пачах та шанчăклă мар. Нумаях пулмасть пирĕн пĕр Шведлер ятлă салтак çухалчĕ. Прикаçра çавăн çинчен çапла пĕлтерчĕç: Шведлер полка хушса панă çынсемпе пĕрле килнĕ пулнă, вăл вырăссем çине каçса тарма хăтланнă, анчах та ăна нимĕç часовойĕсем персе пăрахнă, терĕç. Анчах та тепĕр куннех вырăссен радио саракан станцийĕ урлă Шведлер сăмах тухса каларĕ. Вăл Германи çарĕн салтакĕсене хăй пек тыткăна парăнма чĕнчĕ. Çакăн хыççăн гестапори чиновниксем çĕнĕрен килнĕ салтаксене пурне те пит хытă тĕрĕслерĕç, вара вĕсенчен нумайĕшне каялла тыла ячĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Орел облаçĕнчи Знаменское ялĕнчи халăха тискеррĕн тыткаланă. Çав ялтан инçех те мар темиçе тĕлте тахăшĕ телефон линине татса кайнă пулнă. Гитлерла бандитсем куç тĕлне пулнă 10 хресчене тытнă та персе пăрахнă. Вĕсен шутĕнче 75 çулти колхозник Андрей Михайлович Морозов, 68 çулти Петр Николаевич Сысоев т. ыт. те пулнă.

Сентябрĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Сентябрĕн 28-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Моздок** районĕнче тата **Синявино** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Сталинград районĕнче Н-ски танковăй подразделени противникăн икĕ атакине сирсе янă. Танкистсем 7 оруди, 5 пулемет, 11 автомашина пĕтерсе тăкнă тата гитлеровецсене икĕ ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра гвардеец-минометчиксем атака тума хатĕрленнĕ противник çине сасартăк вăйлăн пеме тытăннă. Минометчиксем нимĕçсен пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре гвардейски Н-ски соединенин боецсем икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 2.000 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе пĕтернĕ, 15 танка тата 2 бронемашинăна çунтарса янă е персе çĕмĕрнĕ, 11 оруди, 23 пулемет тата минометсен 3 батарейине пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра нимĕçсем пирĕн пĕр стрелковăй чаçа темиçе хутчен атакăланă. Противникăн атакисене сирсе янă. Çав çапăçура гитлеровецсен 300 çити салтакĕпе офицерĕ вилнĕ. Пирĕн боецсем 200 винтовкăна яхăн, 19 пулемет, 42.000 патрон, 10 километр тăршшĕ телефон кабелĕ тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем тытса илнĕ.

* * *

Моздок районĕнче Н-ски часть противникпа вăйлăн çапăçса 4 танка пĕтерсе тăкнă тата нимĕçсен пехотине пĕр рота ытла вĕлерсе пĕтернĕ. Цветков лейтенант ертсе пыракан боецсен ушкăнĕ пĕр высотана йышăнса илнĕ. Тытăçура Сакварелидзе юлташ чи малтан çав высота çине хăпарса кайнă та

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Сентябрĕн 28-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

гранатăсем ывăтса 8 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн артиллери икĕ кун хушшинче тăшманăн 22 дзотне çĕмĕрнĕ, 4 станковăй пулемет, 3 миномет тата 12 грузовой автомашина пĕтерсе тăкнă. Пирĕн снайперсем тата разведка тăвакан группăсем активлăн кĕрешнипе 300 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă. Ленинград патне пымалли вырăнсенче зенитнăй артиллери нимĕçсен 4 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Воронеж районĕнче противникăн пĕр батальон пехотипе 8 танкĕ пирĕн позицисене атакăлама хăтланнă. Артиллерипе тата пехотăн хĕçпăшалĕпе персе, тăшманăн пур танкĕсене те пĕтерсе тăкнă, пехотине сапаласа янă.

* * *

Нимĕçсен 340-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 695-мĕш полкран Хĕрлĕ Çарне кусни фельдфебель Вильгельм К. çапла каласа панă: «Эпир Францире тăнă чухне унта Хĕвелтухăçĕнчи фронтра çапса аркатнă дивизи пычĕ. Çав дивизирен тĕрĕссипе илсен пĕр батальон çеç тăрса юлнă. Салтаксем пире вĕсем хăйсем пулнă йывăр çапăçусем çинчен каласа кăтартрĕç. Вĕсем калани пирĕн шухăш-кăмăлсене йăлтах пăсса ячĕ. Российăна кайнă чухне çул çинче салтаксем вăрçатчĕç, вăрçа ылханатчĕç. Эпир кунта темиçе кун хушшинче тӳссе ирттерни эпир шухăшлама пултарнă чи хăрушă япаларан та иртерчĕ. Вырăссем пире ялан орудисемпе тата минометсемпе персе тăчĕç, пире пысăк çухатусем тӳстерчĕç. Çак кунсенче пирĕн участокра вырăс танкĕсем шала татса кĕрсе кайрĕç. Çывăхра тăнă Рейнц лейтенант тарчĕ. Танксем пеме чарăнсассăн, эпир, 19 çын, çĕр çурăкĕсенчен тухрăмăр та тыткăна парăнтăмăр».

* * *

Голланди патриочĕсем хăйсен çĕршывне чуралантарнă нимĕç оккупанчĕсемпе тĕрлĕ майпа кĕрешеççĕ. Консерва фабрикинче гитлеровецсем нимĕç çарĕ валли консервăсем тума тытăннă. Халĕ паллă пулса тăнă тăрăх, консервăсен темиçе ушкăнĕнче кĕленче ванчăкĕсем тупнă. Бееспра пĕр пысăк фабрикăн складне Германие ăма тесе пухнă пир-авăр утилĕ нумай пулнă. Çав склада вут тĕртсе çунтарнă. Пушар темиçе куна пынă, утилĕн мĕнпур запасĕсем çунса кайнă.

Республикăри колхозсенче тырă вырас, авăн çапас, çĕрулми кăларас тата çĕртме тăвас ĕçсем сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне мĕнле пулса пынине кăтартакан

СВОДКА

(процентпа)

Районсем	Кĕрпе тумалли тата пăрçа йышши тырăсене ырнĭ	Авăн çапнă	Çĕрулми кăларнă	Кĕрхи çĕртме тунă
Улатăр	91,9	40,1	94.0	8,6
Элĕк	100	54,4	95,2	16,1
Вăрнар	100	51,8	74,7	13,6
Йĕпреç	99	55.9	72,6	9,2
Ишлей	100	73,4	77,7	13,8
Калинино	100	46,1	91,9	24.7
Канаш	100	61	95,3	23,1
Куславкка	84,7	48,7	50,1	15,5
Комсомольски	98,2	51,1	87,1	10,2
Красноармейски	100	75,1	45,1	8,6
Хĕрлĕ Чутай	100	52,7	100	22,2
Кувакино	86,9	58,5	84,1	3,6
Сĕнтĕрвăрри	96,3	50,9	79,7	18,4
Октябрьски	99,1	47,5	77,6	12,5
Первомайски	100	52,7	61,6	8,5
Пăрачкав	94,8	60,6	60,5	5,6
Советски	100	39,8	64,6	8,6
Сĕнтĕр	100	59,1	74,7	20,3
Вăрмар	89,3	53,6	77,1	11,5
Çĕрпӳ	100	57,1	64,8	13,8
Шупашкар	100	65	92,4	21,3
Чкаловски	95,6	43,4	92,4	9.5
Шăмăршă	100	55,1	91,3	10,4
Шăхасан	100	57,8	94,9	23,8
Çĕмĕрле	99,2	58,3	98,3	19,7
Етĕрне	95,4	53,9	78,2	17,4
Елчĕк	95	40,9	94,4	15,6
Тăвай	95,5	50,7	99,2	21,3
Шупашкар хули	100	56,8	89,6	51,6
ЧАССР тăрăх	97,1	54,4	79,5	14,4
Сентябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне пулнă	95	51,4	59,2	9,2

КУНТА ВАСКАМАÇÇĔ

СОВЕТСКОЕ. Районри колхозсем кăçал 839 гектар çинчен вăрлăхлăх клевер çулса пуçтармалла. Анчах та паянхи куна çак ĕç пачах çителĕксĕр пырать. Сентябрĕн 22-мĕшĕ тĕлне колхозсем клевер çулса пуçтармалли плана 29 процент çеç тултарнă. «Красный Октябрь», «Крестьянская газета», Николаевски ялсоветĕнчи Сталин ячĕпе тăракан, Советски ялсоветĕнчи «Ыраш» — пĕтĕмпе 8 колхоз кăна клевер çулса пĕтернĕ.

Кăçал колхозсен 1.393 гектар çинчен çĕрулми пуçтарса кĕртмелле. Апла пулин те, çĕрулми кăларасси кая юлса пырать. Халлĕхе районра 6 колхоз кăна çĕрулми кăларса пĕтернĕ, 7 колхозра çĕрулми кăларма тытăнман та. «Добролет», «Трудись», «Красный партизан», «Большевик» колхозсем çĕрулмин 6—31 процентне анчах кăларса пуçтарнă.

Агроном И. МИХАЙЛОВ.

Партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ

Сентябрĕн 26-мĕшĕнче партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ. Хулари парторганизацире пропаганда ĕçĕ мĕнле тăни тата ку тĕлĕшри задачăсем çинчен пухура хула комитечĕн секретарĕ **Д. Федоров** юлташ доклад туса пачĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа хулара пĕтĕмпе докладсемпе лекцисем икĕ пин ытла ирттернĕ, вĕсенче çĕршер пин çын пулнă. Вăл шутран парти активĕ валли докладсемпе лекцисем 119 ирттернĕ, вĕсене 7.581 çын итленĕ. Çакăнтан ĕнтĕ хула парторганизацийĕ ĕççыннисене тата активра отечественнăй вăрçă çинчен, гитлерла вăрă-хурахсене çĕнтермелли майсем çинчен ăнлантарса парас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлени курăнать.

Коммунистсем чылайĕшĕ хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе тăтăшах ĕçлеççĕ, «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренсе тухнă, марксизм-ленинизм классикĕсен уйрăм произведенийĕсене вĕренеççĕ. Юлашки вăхăтра пропаганда ĕçĕ Чăвашсоюз парторганизацийĕнче лайăхланчĕ. Парторганизаци секретарĕ Петрова юлташ коммунистсемпе вĕсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинчен час-часах калаçать. Парти членĕ Мусатова юлташ ВКП(б) историйĕ тăрăх икĕ консультаци ирттернĕ. Вăл Ленинăн уйрăм произведенийĕсене вĕренет, халĕ «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕн» 8-мĕш сыпăкĕ тăрăх теориллĕ калаçу ирттерме хатĕрленет. Парти пропагандине Госбанкăн Чăваш республикинчи конторин пуçламĕш парторганизацийĕнче те тăтăшах туса пыраççĕ:

Юлашки вăхăтра чылай парторганизацисем политикăллă агитацие лайăхлатрĕç. Çапла, пир-авăр фабрикĕнче тата Черничкин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра агитациллĕ ĕçе анлăн туса пыраççĕ.

Хулара политикăллă агитаци вăйланнипе пĕрлех пропаганда ĕçĕ те тивĕçлĕ вырăнта тăмалла пулнă. Анчах вăрçă вăхăтĕнче хулара пропаганда ĕçĕ вăйсăрланнă. Уйрăмăнах «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Партин, комсомолăн, советсен, профсоюзсен активĕнчи юлташсем нумайĕшĕ вăрçă вăхăтĕнче ВКП(б) историне вĕренме пăрахнă. Хула совет исполкомĕнчи 30 коммунистран икĕ çын—Кирилловăпа Черпакова юлташсем кăна вăрçă вăхăтĕнче «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» малалла вĕренсе пынă, ыттисем ку енĕпе нимĕн те туман. Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнчи 19 коммунистран виçĕ юлташ кăна «Кĕске курса» хутрансистрен тыткаласа пăхнă, ыттисем хăйсен марксистла-ленинла пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлемен. Финанс Халăх Комиссариатĕнчи 64 служащирен пĕри те «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» вĕренмеççĕ. Хула совет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизацин секретарĕ Маркосов юлташ пропаганда ĕçĕ çине çиелтен пăхнине вăл партиллĕ туйăма çухатнипе кăна ăнлантарса пама пулать. ВКП(б) хула комитечĕ хула совет исполкомĕнчи пуçламĕш парторганизацире пропаганда ĕçне лайăхлатма кирлине темиçе хутчен те кăтартса панă, пуçламĕш парторганизацин пухăвĕ те ку тĕлĕшпе решени йышăннă. Анчах çав кăтартусене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе Маркосов юлташ нимĕн те туман.

Хальхи вăхăтра пирĕн кадрсем харпăрхăйĕн политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерес тĕлĕшпе ĕçлеменнине нимĕнпе те тӳрре кăларма çук. Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн умра тăракан пысăк задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртсе пырас тесен, пирĕн хамăрăн пĕлӳсене ӳстерес тĕлĕшпе пĕрмаях çине тăрса ĕçлес пулать. Общество аталанăвĕн законĕсене пĕлни пирĕн кадрсене хальхи вăхăтри обстановкăна тĕрĕс ăнланма, хамăрăн умри ĕçсене ăнăçлăн туса пыма май парать.

Марксизм-ленинизм теорине вĕренесси кашни коммунистăн обязанноçĕ пулса тăрать. Партин пуçламĕш организацийĕсен секретарĕсемпе партбюросен коммунистсем хăйсен политикăллă пĕлĕвĕсене ӳстерсе пырас тĕлĕшпе мĕнле ĕçленине яланах тĕрĕслесе тăрас пулать, çак ĕçре вĕсене пулăшмалла. Хула комитечĕн пропагандăпа агитаци отделĕн работникĕсен те парторганизацисенче, рабочисемпе служащисем хушшинче марксизма-ленинизма вĕренес ĕçе кирлĕ пек организацилеме тăрăшас пулать.

Çавăнпа пĕрлех пирĕн кадрсен экономикăллă пĕлĕвĕсене ӳстересси çине те ытларах çаврăнса пăхмалла. ВКП(б) Пĕтĕм Союзри XVIII конференцийĕ пирĕн кадрсен экономика ыйтăвĕсене тĕплĕн вĕренсе çитмеллине кăтартса панăччĕ. Çак кăтартăва яланах асра тытмалла. Пирĕн социализмăн политикăллă экономине, хальхи вăхăтри экономикăна тĕплĕн вĕренсе çитмелле. Экономика ыйтăвĕсене лайăх пĕлни кăна пире хуçалăхлă задачăсене ăнăçлăн татса пама май парать.

Доклад тăрăх пренире 8 çын тухса каларĕç.

Глазовский юлташ хăйĕн сăмахĕнче Черничкин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен заводра парти пропагандине мĕнле йĕркелени çинчен, парти историне вĕренес текенсем валли «ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ» ятлă учебниксем çитменни çинчен каласа пачĕ.

Черпакова юлташ (хула совечĕн исполкомĕ) хăйĕн сăмахĕнче вăл Калинин урамĕнчи килхуçи хĕрарăмĕсем хушшинче политикăллă агитацие мĕнле туса пыни çинчен каларĕ, докладчиксен халăх хушшинче ĕçлеме тĕплĕн хатĕрленме, доклад тума кайс умĕн вырăнти условисемпе, фабрикăра, заводра ĕçсем мĕнле тăнипе паллашма кирли çинче чарăнса тăчĕ.

Рябченко юлташ вĕсем госпитальре сывалакан совет воинĕсем хушшинче политикăллă ĕçе мĕнле организацилени çинчен каласа кăтартрĕ.

Кунаков юлташ Н-ски заводри (Челноков юлташ (главнăй инженер пулса ĕçленĕ çĕрте) пуçламĕш парторганизаци коммунистсен, комсомолецсен, рабочисемпе работницăсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерессишĕн мĕнле ĕçлени çинчен калать. Унти коммунистсем «ВКП(б) историйĕн кĕске курсне» нумайăшĕ харпăрхăй тĕллĕн, кружокра тăрса 7 çын, марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене 22 çын вĕренеççĕ. Парти уставĕпе программине вĕренмелли кружокра 18 çын тăраççĕ. Кунсăр пуçне Сталин юлташăн отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи сăмахĕсемпе приказĕсене вĕренекен кружок ĕçлет.

Унтан ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ **М. Андреев** юлташ тухса каларĕ. Вăл хăйĕн сăмахĕнче пропаганда енĕпе парторганизацисем умĕнче тăракан задачăсем çинче чарăнса тăчĕ.

Иванова юлташ (Швейстрочсоюз) хула комитечĕ парти пропагандине организацилес тĕлĕшпе ĕçлеменни çинчен, ку енĕпе йышăннă решенисене пурнăçа кĕртнине тĕрĕслесе тăманни çинчен каларĕ, парткабинетăн ĕçне хытă критикăларĕ. Унтан **Андреева** (7-мĕш номерлĕ шкул) тата **Охандерова** (ВЛКСМ хула комитечĕ) юлташсем тухса каларĕç.

Парти активĕн пухăвĕ хулари организацинче парти пропагандине лайăхлатма кирлине, ку енĕпе мĕнле ĕçсем туса ирттермеллине палăртса решени йышăнчĕ.

КОМСОМОЛĂН ЙЫШĔ ӲСЕТ

ШАМАРША. Комсомолăн «Победа» колхоз çумĕнчи организацийĕ ВЛКСМ членне çĕнĕрен 5 çамрăка илчĕ.

— Эпир çара кайса фронтра фашистсене хирĕç пĕр тумлам юн юлмиччен çапăçма тупа тăватпăр,—тет призывник В. Ялбусев.

Комсомола кĕрекен пур çамрăксем те ĕçри ударниксем, вĕсем малашне те производствăра тăрăшса ĕçлеме пулчĕç.

П. КУЗЬМИН.

Ют çĕршывсенче

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче çар хатĕрĕсем тăвасси ӳсет

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар хатĕрĕсем тăвас ĕçе пăхса тăракан управленин председателĕ Нельсон çак кунсенче çапла каланă: 1941 çулхи декабрь уйăхĕнчен пуçласа çар промышленноçĕн продукцийĕ 350 процент ӳснĕ. Хурçăран тăвакан япаласене уйăхне вăтамран 5.300 пин тоннăлăх туса кăлараççĕ, çав япаласенчен виç чĕрĕкĕ çар нушисем валли каять. Хурçă шăратса кăларасси кăçал нихăçан пулманхи шая—86 миллион тоннăна çитет, пĕлтĕр 83 миллион тонна шăратса кăларнă пулнă.

Çар хатĕрĕсене тăвас ĕçе пăхса тăракан управлени пĕлтернĕ тăрăх, август уйăхĕнче кĕрĕшсе ĕçлекен çынсен хисепĕ 54 миллион çынна çитнĕ.

Аляскăна каякан автострада тăваççĕ

ВАШИНГТОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен çар министрĕ Стимсон çапла пĕлтернĕ: Аляскăна каякан автострада декабрĕн 1-мĕшĕччен, планра кăтартнă срокран темиçе уйăх маларах, ĕçе яма хатĕр пулать, тенĕ. Çав автострада Канада урлă кайса Севонкрикпа (Британи Колумбийĕ) Фербенкс (Аляска) витĕр тухать. Автострада тăршшĕ—2.500 километр. Ăна Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Канада хушшинчи килĕшӳ тăрăх тунă. Ĕçлеме кăçалхи март уйăхĕнче тытăннă. Ĕçе Америка инженерĕсем ертсе пынă.

Çывăхри Хĕвелтухăçĕнче Англи войскисем противникăн тылне пырса тапăннă

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англи войскисем нумаях пулмасть тĕнĕл держависен тылĕпе пушхир тăрăх 500 миля кайса, Джало оазисне (Ливия) тата Бенгазипе Барка районне тухса тапăннă. Çав рейд вăхăтĕнче тăшмана чылаях пысăк сиен кӳнĕ. Бенгази районĕнче противникăн çĕр çинче ларнă 30 самолетне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Тата унсăр пуçне импери войскисене атакăлама хăтланнă темиçе самолета персе ӳкернĕ. Çав операцисенче пулнă артиллери тăшманăн тĕрлĕрен объекчĕсем çине, вăл шутра çар хатĕрĕсен склачĕсем çине, ăнăçлăн пенĕ. Рейдра пулнă вăйсен хисепне кăтартмаççĕ, çапах та вĕсем чылай пысăк пулнă пулмалла.

Рейд тăшманшăн нимĕн кĕтмен çĕртен сасартăк пулса тухнă. Пуринчен ытла Джало оазис çине пырса тухни питех те ăнăçлăн пулса иртнĕ. Оазиса Англи чаçĕсем йышăнса илсе 6 куна яхăн хăйсен аллинче тытса тăнă. Англи вăйĕсем оазиса унта итальянецсен моторизованнăй пысăк вăйĕсем пырса çитсен тин хăварнă. Противникăн Джало оазисĕнчи гарнизонне тата унти çар объекчĕсене пысăк сиен кӳнĕ. Хăйсен умне лартнă задачăна пурнăçа кĕртсен, Англи вăйĕсем хăйсен базисене каялла таврăннă.

МАДАГАСКАРТА — ОСАДНĂЙ ПОЛОЖЕНИ

ЛОНДОН. сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: Мадагаскарти Англи войскисен главнăй штабĕ пĕтĕм утрав çинче осаднăй положени туни çинчен пĕлтернĕ. Ахаль чухнехи яланхи лару-тăру пулса çитиччен йĕрке тытса тăма мерăсем йышăнаççĕ.

Англипе Германи хушшинчи сывлăшри вăрçă

ЛОНДОН, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Голланди çыранĕсем патĕнче тата Па-де-Кале проливĕнче Франци çыранĕсем çывăхĕнче противникăн карапĕсене тапăннă. Атакăсем мĕнле сиен тунине пĕлме йывăр, çапах та Голланди çыранĕсем патĕнче бомбăсем пĕр вăтам суту-илӳ судни çине тĕл ӳкнине палăртнă.

Противникăн самолечĕсем сентябрĕн 26-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин кăнтăр-хĕвеланăçĕнчи пункчĕсенчен пĕринче бомбăсем пăрахса хăшпĕр сиенсем кӳнĕ. Жертвăсем нумаях мар.

ГИТЛЕРОВЕЦСЕМ ГРАЦРИ АВСТРИЕЦСЕНЕ ТЕМĔНТЕПĔР УСАЛ ТУНИ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Оверсис ньюс агентстви çапла пĕлтерет: алла илнĕ сведенисем тăрăх, суд Грацра (Австрия) австриецсен ушкăнне асаплантарса вĕлерме приговор йышăннă. Вĕсене пурне те Германие хирĕçле организаци тума хăтланнă тесе айăпланă.

ФРАНЦИПЕ ГЕРМАНИРЕ ТУБЕРКУЛЕЗПА ЧИРЛЕКЕНСЕН ХИСЕПĔ ӲСНИ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Швейцарише медицинише вохеншрифт» журнал çапла пĕлтерет: Францире ӳпке туберкулезĕпе чирлекенсен хисепĕ 20 процент ӳснĕ, ытти йышши туберкулезпа чирлекенсен хисепĕ 30 процент ӳснĕ. Уçă туберкулез 1938 çулхи шайран 250 процент ӳснĕ.

«Мюнхнер медицинише вохеншрифт» пĕлтернĕ тăрăх, Германире туберкулезпа чирлекенсен хисепĕ 1931 çултан пуçласа 1939 çулччен висĕ хут ӳснĕ, 1939 çултан пуçласа 1941 çулхи июнь уйăхĕччен 6 хут ӳснĕ.

Германире медицина пулăшăвĕ начарланса пырать

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Врачсем, медикаментсем, медицина оборудованийĕ тата продовольстви çитменнипе, çавăн пекех тата Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронтран чирлĕ тата пыйтланса кайнă салтаксем таврăннине пула, Германире халăха санитари енĕпе пулăшу парасси питĕ начарланнă. Гитлеровецсем дизентерипе, туберкулезпа тата тифпа чирлекенсен хисепĕ ӳснĕ пирки пăшăрханаççĕ. Илнĕ сведенисем тăрăх, дизентери унта вăйлăн саралакан чир пулса кайнă. Халăх тăраниччен çиеймест, скарлатинăпа, дифтерипе тата параличпа чирлекенсен хисепĕ те ӳссе пырать. Госпитальсем пурте аманнисемпе тулса ларнă. Граждăнла халăха сыватмаççĕ

Германи самолечĕсем Швеци чиккине пăсни

СТОКГОЛЬМ, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин телеграф агентстви çапла пĕлтерет: сентябрĕн 24-мĕшĕнче каçхине ютçĕршывсен йышлах мар самолечĕсем (лайăх пĕлсе çитнĕ тăрăх, вĕсенчен иккĕшĕ Германи самолечĕсем пулнă) Пайяла районĕнче тата унтан кăнтăралларахра та Швеци чикки урлă вĕçсе каçнă. Самолетсем чикĕ линийĕ тăршшĕпех вĕçнĕ, Хапаранда патĕнче кăна пĕр самолетне асăрхаттармалла пенĕ.

«Свенска Дагбладет» хаçат çапла çырать: «Юлашки вăхăтра çав вырăнтан Германи самолечĕсем час-часах вĕçсе çӳреме тытăнчĕç. Çавăнпа та хулари халăхăн çилли ӳснĕçемĕн ӳссе пыни палăрма пуçларĕ. Юлашки эрне хушшинче Хапаранда тĕлĕнче нимĕçсен сахалтан та 5 самолечĕ вĕçнĕ. Пуринче те вĕсем Финлянди енчен вĕçе-вĕçе кĕрсе, аялтанах е вăтам çӳллĕшре вĕçсе çӳренĕ. Хапаранда çывăхĕнче çирĕплетнĕ район тавра вĕçсе çаврăнсан, вĕсем ялан тенĕ пекех каялла Финляндие вĕçсе кайнă.

ИНДИРИ ЛАРУ-ТĂРУ

НЬЮ-ЙОРК, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви Навабганджран пĕлтернĕ тăрăх, Бирма чикки çывăхĕнче тата Бомбейра полицие демонстрантсем хушшинче тытăçусем пулса иртнĕ. Алигарх ятлă чугунçул станцийĕнче (Пĕрлешӳллĕ провинцисем) бомба çурăлса кайнă, 4 çын вилнĕ е йывăр аманнă.

ДЕЛИ, сентябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Правительство йĕркене хирĕç тăвакан ĕçсемшĕн унти халăха ушкăнĕпе ответ тыттарас мерăсемпе усă курать. Англичансен «Нейшнл-коль» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, Бихар провинцинчи темиçе района 1.200 пин рупийлĕх штрафланă.

Карачире тăватă фабрикăри рабочисем предприяти хуçисене октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа забастовка тапратса ярасси çинчен пĕлтернĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

Вниманию сельсоветов и колхозов, имеющих телефонные установки.

Радиокомитет при СНК Чувашской АССР ставит в известность, что согласно постановлению Совнаркома ЧАССР ежедневно по сельским телефонным проводам передаются следующие радиопередачи: (время местное)

7.35 до 7.58—Передачи из Чебоксар, состоящие из следующих материалов:
- а) Постановления партийных и советских органов (на русском и чувашском языках);
- б) Сообщения Советского Информбюро (на чуваш. языке)
- в) Боевые эпизоды с фронтов отечественной войны (на чувашском языке);
- г) Союзная и иностранная Информация ТАСС (на чувашском языке);
- д) Выступление руководящих работников и передовиков промышленности, транспорта и с/х. (на русском и чувашском языках);
- е) Корреспонденции из районов Чувашской АССР (на русском и чувашском языках).

8.00— 8.14—„Последние известия" из Москвы (утренний выпуск).

20.00—20.14—„Последние известия" из Москвы (вечерний выпуск).

РАДИОКОМИТЕТ ПРИ СНК ЧАССР

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана 28 колхоз çеç пурнăçланă

КУКЕÇ. ЧАССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн «Республикăри колхозсенче çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата выльăх-чĕрлĕх хисепне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановленине тĕплĕн пурнăçласа пынипе районри малта пыракан колхозсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ăнăçлăн ӳстереççĕ. Паянхи куна район мăйракаллă шултăра выльăхсем ĕрчетес тĕлĕшпе çулталăкри плана 100 процент, сыснасем енĕпе 110 процент, чăх-чĕп, хур-кăвакал енĕпе 100 процент, кроликсем ĕрчетес енĕпе 120 процент пурнăçа кĕртнĕ. Пур тĕрлĕ выльăхсем енĕпе те çулталăк планне районра пурĕ 28 колхоз пурнăçланă, мăйракаллă шултра выльăхсем ĕрчетмелли плана пурĕ 71 колхоз, сыснасем енĕпе 62 колхоз, сурăхсем енĕпе 44 колхоз çеç пурнăçа кĕртнĕ.

Шемшер, Шорчакасси, Сарапакасси ялсовечĕсенчи колхозсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ăнăçлăн тултарнă, фермăсене пурне те комплектласа çитернĕ, выльăх-чĕрлĕхе лайăх пăхса хĕл каçарма хатĕрленсе çитнĕ. Питукассинчи «Память Ленина» колхоз кăçал 20 пуç сысна, 40 пуç сурăх, 150 чăх вырнаçмалăх çĕнĕ витесем туса лартрĕ. Выльăхсем валли утă, клевер, улăм, тымар-çимĕç çителĕклĕ таранах хатĕрлесе хурассишĕн кунта колхозниксем тимлĕн ĕçлеççĕ. 47 тонна силос хывса хăварнă.

Çавăн пекех Калинин ячĕпе тăракан, «Кормилец», Ворошилов ячĕпе тăракан, «11 лет Чувашии» «Осоавнахим», «Молния» тата ытти колхозсем те выльăх-чĕрлĕхсене хĕл каçарма витесем юсаççĕ, çĕнĕ витесем тăваççĕ. Ку колхозсенче колхозниксемпе колхозницăсем обществăллă выльăх-чĕрлĕхе вăйлăн ӳстерессишĕн тăрăшса ĕçлени уççăнах курăнать.

Малта пыракан колхозсем выльăх-чĕрлĕхĕн йышĕке продуктивноçне ӳстерессишĕн çамрăк выльăхсене тĕрĕс-тĕкĕл пăхса усрассишĕн пысăк тимлĕхпе ĕçлеççĕ пулсан, районри ытти чылайĕш колхозсем ку ĕç çине пачах та çителĕксĕр пăхаççĕ. Паянхи куна чылай колхозсенче фермăсене комплектласа çитермен, витесене юсаса йĕркене кĕртмен, çителĕклĕ таран апат-çимĕç хатĕрлемен.

Янашкассинчи «Труд» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана пур йышши выльăхсем енĕпе те пурнăçламан, колхозăн фермисене татах 5 лаша, 8 пуç ĕне-пăру, 15 пуç сысна, 24 пуç сурăх, 25 пуç чăх кирлĕ. Апла пулин те выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес плана пурнăçлас тĕлĕшпе колхоз правленийĕ енчен нимĕнле мерăсем йышăнни те çук. Витесене юсама тытăнман, силос пĕр тонна та хывман.

Типçырмари «Большая Волга» колхозăн сурăх ферминче кăçал 40 сурăх пулмалла. Колхозăн сурăх ферми пур тесе шутланать, анчах вăл фермăра пĕр ăратлă такасăр пуçне урăх пĕр пуç выльăх та çук. Колхоз сурăхсем илме колхозниксемпе договорсем тунă, анчах та колхоз председателĕ Кириллов вăл сурăхсене халĕ те фермăна пухман, витесене юсаман, силос хывассипе те кая юлса пырать. Çавăн пекех Красин ячĕпе тăракан, «Чембек» тата ытти хăшпĕр колхозсем те фермăсене комплектласа çитермен. «Чембек» колхозăн председателĕ «тырă нумай каять» тесе, контрактациленĕ выльăхсене фермăсене илмесĕр тăрать. Çав вăхăтрах иртнĕ çул выльăхсем илме уйăрнă 131 центнер тырăпа усă курмасăр тăраççĕ.

«Актив» колхозăн фермисенче 18 пуç сурăх çитмест. Апла пулин те колхоз 11 пуç сурăха пуснă. Çакăн пек çитменлĕхсем вĕсем колхоз руководителĕсем колхозсен обществăлă выльăх-чĕрлĕхне ĕрчетес ĕçре ответлăха туйманнине кăтартса параççĕ. Иккĕмĕш çул хаяр вăрçă пынă вăхăтра колхозсен обществăллă выльăх-чĕрлĕхĕн йышне ӳстерес ĕçе чарса пыракансене, хăйсен тимсĕрлĕхĕпе фермăсене юхăнтарса пыракансене вăрçă вăхăтĕнчи законпа тивĕçлĕ ответ тыттармалла.

Çакăнпа пĕрлех чылай колхозсен фермисенче тасамарлăха, йĕркесĕрлĕхе халех пĕтерме кирли çинчен асăрхаттармалла. Нумай çĕрте фермăсенчи çынсем тивĕçлĕн ĕçлеменнине пула выльăхсем тĕрлĕ чир-чĕрпе чирлеççĕ. Иккассинчи «Майăн 1-мĕшĕ» колхозăн сысна ферминче тасалăх çук. Сыснасем кĕсеиленсе пĕтнĕ. Фермăра ĕçлекенсен айăпĕпе кунта кăçал 27 сысна çури вилнĕ. Çакăн пек киревсĕр тĕслĕхсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тĕпренех пĕтермелле. Фермăра ĕçлекенсен ĕç дисциплинине çирĕплетмелле.

Т. ЛОГИНОВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11350 (Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2. Ф 6 58 24 п. н.